Алексеев С.Н. Пĕр парта хушшинче :[К.В. Ивановпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕренни çинчен : асаилÿсем] / С.Н. Алексеев // Тăван Атăл. – 1948. – Кн. 32. – С. 154-159.



çинчен пачах та çырмастчĕ. Унăн туртăмĕ—художество академине кĕресси пулнă, ун çинчен вăл çыркалатчĕ.

Иванова юлашки хут эпĕ 1912 çулта çулла тĕл пултăм. Вăл акă мĕн сăлтавпа пулчĕ. Эпĕ 1911—1912 çулсенче çĕнĕ чăваш букварĕ çырнăччĕ. Алçырăвĕсене Иван Яковлевич патне ятăм.

Букварь Иван Яковлевича кăмăла кайнă. Вăл мана букварь пичетлеме Чĕмпĕре чĕнчĕ. Иванов ун чухне Чĕмпĕрте пурăнатчĕ, букварь валли картинăсем тума хапăл тусах хăй çине илчĕ. Çав букварĕн пĕрремĕш изданине пăхсан, Иванов мĕнле лайăх художник пулнине курма пулать. Хăйĕн юратнă поэчĕ Лермонтов пек, Константин Васильевич пысăк талантлă поэт кăна мар, талантлă художник та пулнă.

1912 çулта Иванов хăйĕн учителĕпе — Некрасов художникпа пит туслă пурăнатчĕ. Эпĕ те К. В. Ивановпа ун патне хăш чухне хăнана кайкалаттăм. Вĕсен иккĕшин те мĕнпур калаçăвĕ художество çинчен кăна пыратчĕ.

Кĕркуннеччен чăваш букварьне кăларма май пулмарĕ Цензура питĕ чăрмантарчĕ. Пĕрне улăштарсан, цензура мĕн те пулин тата тепре тупатчĕ, çапла сăлтав хыççăн сăлтав купаланса пыратчĕ. Вара вĕренÿ çулĕ пуçланса кайнă пирки эпĕ Чĕмпĕртен тухса кайрăм. Букваре кăларма эпĕ Иванова каласа хăвартăм. Эпир унпа пит ăшшăн уйрăлтăмăр. Вăл мана асăнмалăх хăйĕн карточкине пачĕ, тÿнтер енче хăйĕн аллипе „*другу на память*" тесе çырчĕ. Çав карточка манăн халĕ те сĕтел çинчех ларать.

# Пĕр парта хушшинче

С. Н. АЛЕКСЕЕВ

Чĕмпĕрти чăваш шкулне эпĕ 1905 çулхи кĕркунне пырса кĕтĕм. Ялта икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă пирки мана тÿрех пĕрремĕш класа илчĕç; конкурса таçтан та чăваш ачисем килсе тулнăччĕ, çавăнпа экзаменра чылаях тăрăшмалла пулчĕ.

Пире класа илсе кайрĕç. Унта икĕ енче партăсем лартса тухнă, кашни парта хушшине виçĕ çын ларма пултарать Эпĕ вăта çĕре лартăм, манпа юнашар чăваш халăхĕн пулас аслă поэчĕ Константин Васильевич Иванов ларчĕ. Вăл Чĕмпĕр шкулĕнче приготовительнăй класра икĕ çул вĕреннĕ, унччен ялти пуçламăш шкула кăна пĕтернĕ иккен.

Вĕренме кĕнисем чылайăшĕ çăпата сырнăччĕ, тăла сăхман тăхăннăччĕ. Константин çи-пуç енчен ыттисенчен уйăрăлса тăратчĕ: шалаварпа атă, сарă бобрикран çĕленĕ пиншакпа пальто тăхăннăччĕ. Кăмăлĕпе вăл лăпкă та сăпай (ачаччĕ,

хăйне ыттисенчен уйăрса, ашкăнса е мухтанса тытмастчĕ, уроксене хатĕрлесе çитернĕ хыççăн пĕр-пĕр кĕтессе кĕрсе, хăй кăна пĕлекен кĕвве хуллен юрласа ларатчĕ, анчах эпĕ вăл çапла сăмахсем шыраса сăвăсем çырнине чылай вăхăт пĕлмен. Константин вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарнине, хăй çырнине тата ӳкерме ăсталанса пынине каярахпа кăна туйса илтĕм, мĕншĕн тесен вăл, е хăйĕнчен куласран хăраса, е вăтаннипе, юратнă ĕçĕсене питĕ вăрттăн тăватчĕ, шавласа çӳреме юратмастчĕ.

Константин хăйĕн ĕçĕсене чи сывăх тусĕсене, хăйĕн пек шавлама юратманнисене кăна кăтарткаланă. Эпĕ унпа икĕ çул хушши пĕр парта хушшинче лартăм; унтанпа хĕрĕх çул иртсе кайрĕ, пулса-иртнисене пайтах манса кайнă ĕнтĕ.

Константинăн темиçе хулăн тетрадь пурччĕ, вĕсене хăй сăвăласа çырнă тата вырăсларан куçарнă япаласемпе тултарнăччĕ, унта карандашпа ӳкернисем те пурччĕ.

Вăл, ача чухне „Рейнеке лис" е çавăн пек илтĕнекен ятлă вырăсла кĕнекене сăвăлла куçарнине эпĕ астăватăп, халĕ ячĕ ун пекех тесе ĕнентерсех калама пултараймастăп, анчах „лиса" е „лис" сăмах пурри пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Эпĕ кайран, епле кăна шырасан та, çавăн пек ятлă вырăсла кĕнеке кураймарăм. Куçарни Константинăн хăйĕн кăмăлне те каятчĕ, эпĕ вăра сăввисем питĕ янранине каçса кайсах итлеттĕм. Ача чухне çырнисем 1906 çулта, хăйсен килĕнче вут тухсан, çунса кайнă. Кĕркунне, çуллахи каникултан таврăнсан, Константин тетрачĕсемпе ӳкерчĕкĕсем çунса кайни çинчен кулянса каласа пачĕ.

— Килти çурт-йĕре мар, тетрадьсемпе ӳкерчĕксене хĕрхенетĕп, — тетчĕ вăл.

Пирĕнпе вĕреннĕ чухне художество енчен те, поэзи енчен те хăйпе пĕр пекех вăйĕпе тĕрекне, сăмах янравĕпе сăр илемне кăтартатчĕ, малашне вăл пысăк пархатарлă поэтпа пĕрлех хăватлă художник пуласси 16 çулхи ачарах курăнса тăратчĕ.

Рисовани урокне художество академинчен вĕренсе тухнă Некрасов преподаватель вĕрентетчĕ. Акă вăл темĕнле фигура илсе килчĕ те кафедра (çӳлĕ сĕтел) çине лартрĕ. Кам ăçта, хăш енчен курать, çавăн пек ӳкермелле, тесе ăнлантарать пире Некрасов. Эпир япала чĕркемелли сăрă хут çине кăмрăкпа ӳкереттĕмĕр. Юриех çунтарса тунă кăмрăк татăккисем 15—20 сантиметра яхăн тăршшĕччĕ. Некрасов класра каллĕмаллĕ уткаласа çӳрет, хутран-ситрен ачасем патне пырса тăрать, ăнлантарать, тӳрлеткелет. Акă пирĕн парта патне пычĕ, Константин хутне илсе пăхрĕ, шухăша кайнă пичĕсем çинче хăйĕн ученикне мухтанине кăтартакан сăн выляса илчĕ. Константин чăнах та ăста художник пек тĕрĕс ӳкернĕ.

Константин художество ĕçне ятарласах ниçта та вĕренмен, сăрсене хут çине епле хурассине, икĕ е темиçе сăра

хутшăнтарса ярассине те кăшт кăна пĕлкеленĕ. Хăй пĕлнĕ пек чухласа, вăл Иван Яковлевич портретне пир çине çуллă сăрсемпе ÿкернĕччĕ. Пĕр вăхăтрах-и е маларах Некрасов та пир çинче ÿкернĕччĕ. Çак икĕ ĕçе пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхсан, пире Константин ÿкерни Некрасовăннипе пĕр танах туйăнатчĕ. Эпир ăна Константин хамăрпа вĕреннĕ пирки савăнса ÿстерсе хак панă пулĕ, анчах портречĕ Иван Яковлевич сăнне питĕ те тĕрĕс кăтартса паратчĕ, искусствăра ăнланакан çынсем те Иванов çырнă портрета мухтатчĕç, çамрăк ачаран малашне пысăк художник пулассине шанса калаçатчĕç.

Парта çинче хатĕр таса хут выртать пулсан, вăл пĕр-пĕр кулса е анаслаcа ларакан ачан сăнне хăвăрт кăна ÿкерсе илетчĕ, тÿрлеткелетчĕ, кайран вара кăтартатчĕ: „Санăн сăну кулнă чухне çакăн пек", тетчĕ. Чăннипех те ăста ÿкеретчĕ, çын портречĕ питĕ тĕрĕс пулатчĕ.

Эпир сочиненисене уйăхне икĕ хут çыраттăмăр. Вырăс чĕлхине вĕрентекен Кочуров тема парса хуратчĕ, пĕр икĕ эрне хушшинче эпир çырса хатĕрлеттĕмĕр. Преподаватель хăй пăхса тухнă тетрадьсене валеçсе тухатчĕ те киле çĕнĕ тема парса яратчĕ.

Сочиненисене пама пĕр-икĕ кун тăрса юлсан, учениксем каçсерен хăйсен ĕçĕсене тÿрлетме тытăнатчĕç, куçарса çыратчĕç. Константин тусĕсем ĕçленине курсан, партă хушшинче парта çине таянса шухăша кайса ларатчĕ, сочиненин планне туса çитерне хыççăн вăл тÿрех тетрадь çине çырма тытăнатчĕ, турткаласа тепĕр хут куçарса тăмастчĕ.

Константин сочиненийĕсем яланах «5 плюс» хак илетчĕç, хыçалта учитель тата уйрăм «минус» лартатчĕ — черновиксăр тÿрех çырнă пирки унăн сочиненийĕ питĕ лайăх пулсан та тасах пулса çитейместчĕ.

Константин суякан çынсене тата камăн та пулин кăмăлне хуçнине питĕ те юратмастчĕ, анчах вăл хăйĕн шухăшне калаcа парас тесе шавлаcа çÿреместчĕ.

Вырăс чĕлхипе вĕрентекен Кочуровпа историпе вĕрентекен Никифоров пуп учительсен советĕнче пĕрремĕш курсра вĕренекенсем çинчен темĕн те пĕр элеклесе калаçнă. Çак хыпар пирĕн хăлхана та пырса кĕчĕ. Пиртен маларах вĕреннисем те, пирĕн класра вĕренекенсем те вĕсене ят панăччĕ: Кочурова питĕ те кăшкăрашма юратнине кура „извозчик" тетчĕç, Никифорова — „Мамай" тетчĕç, мĕншĕн тесен вăл Мамай çинчен нумай калаcа паратчĕ, хăйĕн сăнарĕ те Мамайăнни пекех пулса тухатчĕ.

Пĕрре, вырăс чĕлхипе вĕрентнĕ чухне, Кочуров *„Закадычные друзья"* тени çинче чарăнса тăчĕ, пире ăнлантарса пачĕ. Учительсен советĕнче Кочуровпа Никифоров пĕрремĕш класри ачасем çине тапăнса, вĕсене тиркесе калаçнине Константин аса илнĕ пулас, вăл пĕррехинче доска çине каррикатура ÿкерсе хунăччĕ. Унта Кочуровпа Никифоров катка умĕнче ларатчĕç,

аяла „*Извозчик и Мамай, друзья закадычные*“ тесе çырса хунăччĕ.

Çак ӳкерчĕк ачасен кăмăлне кайрĕ, урока Никифоров пуп килсе çитрĕ, каррикатурăна курчĕ, анчах хăйне ăнланманçи пек тыткаларĕ, доскана тасатма хушрĕ.

Шкулти ученикçем, питĕрех те пĕрремĕш класра вĕренекенсем, казармăри пек пурăнатчĕç, администраци хулана тухса çӳреме ирĕк памастчĕ, театра кайса курма юрамастчĕ.

Пĕррехинче хулара лайăх постановка пулмаллаччĕ, „Ревизор“ пек астăватăп. Пилĕк ача çак пьесăна курма вăрттăн тухса кайнă, вĕсем хушшинче Константин та пулнă. Большая Конная урама тухнă çĕрте ун чухне çурт тапрашĕ çукчĕ, çӳллĕ йывăç хӳме кăначче. Хулана вăрттăн тухса çӳреме ачасем ун айне чавса пĕр пĕчĕк хушăк тунăччĕ, унтан хырăмпа шуса кăна тухма пулатчĕ.

Каçхине занятисем иртнĕ хыççăн класа яланах дежурствăри учитель килетчĕ, каçхи кĕлĕсене вулаттаратчĕ, вара кайса çывăрма ирĕк паратчĕ. Ку каçхине дежурствăна пĕр пуп килнĕччĕ. Вăл пире пурне те шутласа тухрĕ те 5 çын çуккине пĕлчĕ.

— Мĕншĕн пурте мар? — терĕ вăл.

— Чирленĕ пулĕ, — терĕ тахăшĕ.

Пилĕк çын театра кайни çинчен пур ученикçем те пĕлмен пулас. Эпир çывăрмалли пӳлĕмре хамăр туссене епле те пулин хӳтĕлесси çинчен канашларăмăр, çуккисен вырăнĕсене пальтосемпе пиншаксем хутăмăр та çиелтен одеялсемпе витсе тухрăмăр. Çынсем хăйсен пуçĕсене одеялпа витсе çывăрнă пекех курăнать.

Пуп пӳлĕме килсе кĕрет, пăхса çӳрет те каллех тухса каять. Нумаях та вăхăт иртмест, вăл тепĕр хут килсе кĕрет, пĕр ача ăçта выртнине ыйтать. Вăл ача чиркӳре ĕçлекелетчĕ, пуп ăна ырана темĕнле ĕç парса хăварасшăн иккен. Вăл пĕрне пырса вăратма хăтланать, теприне, анчах пурте хытă çывăрнă пек мăкăртатса кăна илеççĕ. Пуп çапла вăратса çӳрерĕ, пĕр койка çинче çын вырăнне пиншак выртнине курах кайрĕ те тĕлĕнчĕ, вара, паллах ĕнтĕ, Иван Яковлевич патне тӳрех вĕçтерчĕ.

Эпĕ йывăç хӳме патнелле тухрăм та шкулта ĕçлекенсемпе хуралçăсем ларнине курах кайрăм. Хăшĕ ухват, хăшĕ турчăка тытнă. Вĕсене яра кунах ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн ăшă вырăнсем çинчен тăратнă, çавăнпа вĕсем кӳренсе калаçаççĕ, вĕсене хулана вăрттăн тухса кайнă ачасене тĕл пулса палласа илме тăратнă иккен.

Эпĕ ачасене вăратрăм та хамăр юлташсене епле инкек кĕтни çинчен каласа патăм. Вĕсене епле те пулсан çăлса хăварас терĕмĕр.

Театра вăрттăн çӳресси пирĕн хушăра час-часах пулкалатчĕ, çавăнпа та эпир пирĕн туссем театртан хăçан, хăш

сехетре килессине сиссе илтӗмӗр. Эпӗ Константин сарӑ пиншакне тӑхӑнтӑм та йывӑҫ хӳме патне кайса выртрӑм. Чӑнах та, кӗтнӗ пекех, пӗр вунӑ минутран пирӗн ачасем килчӗҫ.

Эпӗ вӗсене пӗтӗмпе каласа патӑм, хам каллех пӳлӗме кайрӑм та пур ачасене те вӑратрӑм. Эпир коридора тухрӑмӑр, театртан килнисем пирӗнпе хутшӑнса кайрӗҫ, ҫывӑрма кӗчӗҫ. Ҫапла вара вӗсене никам та пӗлме пултараймарӗ.

1907 ҫулхи хӗлле типӗ тытмалли вӑхӑт килсе ҫитрӗ. Пире типӗ апат кӑна пама тытӑнчӗҫ, ҫимелли питӗ те начарланчӗ. Эпир администрацирен ирхине кулач пама ыйтасшӑнччӗ. Пире ирхине апат ҫитермен пулмалла, питӗ касӑлса выҫӑхнине астӑватӑп.

Кулач ыйтни ҫинчен ачасемпе калаҫма Некрасов художнике хушнӑччӗ. Вӑл пире каҫхине чиркӗве илсе кайрӗ, ӳкӗтлеме тытӑнчӗ. „Ҫӑкӑрпа кӑна мар, турӑ каланӑ сӑмахпа ҫын тутӑ" терӗ вӑл евангели сӑмахӗсене аса илсе.

Тепӗр кун доска ҫине „Этем ҫӑкӑрпа кӑна мар, кулачпа тутӑ" тесе ҫырни сиксе тухать. Эпӗ ун чухне ҫак хаяр сӑмахсене Константин ҫырнӑ пуль тесе шутларӑм, халӗ те ҫав шухӑш ман пуҫран каймэн.

Кочуров питӗ усал ҫынччӗ, чӑваш ачисене юратмастчӗ, хӑшне-пӗрне юриех начар отметкӑсем лартса паратчӗ. Пӗрремӗш класрисем пурте ӑна кураймастчӗҫ, ҫавӑнпа эпир ӑна ӗҫрен кӑларма ыйтас шухӑш тытрӑмӑр. Администраци пирӗнпе килӗшмесен, Кочурова хирӗҫ бойкот тытас, анчах ытти преподавательсемпе ӗлӗкхи пекех вӗренес, терӗмӗр.

Кочуров урока пырса кӗрсен, вӗренекенсем пурте команда панӑ чухнехи пекех тӑчӗҫ те кӗпӗрленсе тухса кайрӗҫ. Кочуров пушӑ класра пӗр пӗччен тӑрса юлчӗ. Эпир ҫакӑн пек хирӗҫ тӑни ахалех иртсе кайма пултарайман, малтан пӗр преподавателе ӗҫрен кӑларма кӑна ыйтнӑ пулсан, малашне политикӑллӑ ыйтусем кӑларса тӑратрӑмӑр. Хамӑрӑн пурӑнӑҫа та лайӑхлатас ыйтӑва сиктерсе хӑвармарӑмӑр, — ҫаксене пурне те кӑтартса петици ҫыртӑмӑр, ӑна вара сасӑласа вӑрттӑн йышӑнтӑмӑр, петицине йышӑнман хушӑрах уҫӑнах забастовка пуҫласа яма пурте хатӗр иккенне кӑтартрӑмӑр. Администрацине кам петицине кайса парасси ҫинчен ыйту ҫӗкленчӗ. Ик-виҫ ҫын уйӑрса парсан, вӗсене, паллах ӗнтӗ, шкултан кӑларса сирпӗтеҫҫӗ. Ҫавӑнпа петицине пама пӗтӗм класпа кайрӑмӑр, малта пӳ енчен чи пӗчӗккисем тӑнӑччӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн нумай та вӑхӑт иртмерӗ, пӗрремӗш класа салатса ярас пирки Хусантан хут та килсе ҫитрӗ, 1907-мӗш ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе — 20-мӗшӗнче) эпир хамӑрӑн килсене салантӑмӑр, анчах, ҫивӗчрех ачасене кӑларӗҫ те, ыттисене шкула каллех пухаҫҫӗ пулӗ, тесе шутланӑччӗ.

Эпӗ нихӑш шкула та вӗренме кӗреймерӗм, мӗншӗн тесен каялла тавӑрса панӑ свидетельствӑсем ҫине ҫапла ҫырнӑччӗ:

*„Означенный в сем свидетельстве обучался в вверенной мне школе с 1-сентября 1905 г. по 4 марта 1907 г. и уволен за подачу петиции и забастовку".* Çавăн пек çырнă хутсене çулла пĕрремĕш класра вĕреннисене пурне те ярса панă, вĕсен умĕнче нимле шкул алăкĕ те уçăлма пултарайман.

Иванов çав çулах кĕркунне Чĕмпĕре пынă, вăл вĕренме мар, ĕçлеме, кĕнекесем куçарма килни çинчен мана çырса пĕлтерчĕ. Пысăк талантлă поэт тепĕр çул хăйĕн „Нарспи" поэмипе юмахĕсене пичетлесе кăларнă.